**Чĕрем ыратни**

Пĕр çавăрса илсе пĕр юрлăттăм —
Ăшăмра мĕн пуррине калăттăм,
Ăшра мĕн пуррине каласассăн
Пĕр хурланса чунăм пĕр чарăнмĕ...

Ай-хай кăна чунăм, пĕр чунăмçăм!
Санăн сăвву вăрăмах пулминччĕ,
Санăн сăвву вăрăмах пулмасан та
Ăшăмра мĕн пуррине калинччĕ;

Ăшра мĕн пуррине каласассăн
Эсĕ, чунăм, пророк пек пулăттăн;
Вара эсĕ пророк пек пулсассăн
Санăн чĕлхӳ вут пекех çунĕччĕ.

Çапла эсĕ тĕрĕс сăмахупа
Этем ирсĕрлĕхне кăтартăттăн;
Этем ирсĕрлĕхне кăтартсассăн
Сан çине этем хурт пек сырăнĕ...

Ай-хай кăна, чунăм, пĕр чунăмçăм!
Куллен-кунах хĕнпе хуйхăратăн;
Епле-епле сăвă эс юрлăн-ши?
Епле сăвăпа хăвна пусарăн?!.

Пĕр çавăрса илсе юрлăттăм,
Ăшăмра мĕн пуррине калăттăм;
Ăшăмра мĕн пуррине каласассăн
Пĕр хурланĕ чунăм, пĕр ĕсĕклĕ...

*Турхан, Я. Чĕрем ыратни : сăвă / Я. Турхан // Революцичченхи чăваш литератури : текстсем / [А. В. Васильев, Г. Ф. Юмарт пухса хатĕрл.] – Шупашкар, 1984 – Т.1 : XX ĕмĕрччен. – 1984. – С. 236-237.*